“Чувашия-Поддержка” страхлакан компани страховани рынокĕнче 15 çул

# Ял аталанăвĕ – пирĕн тĕп тĕллев




***2007 çулăн юлашки кунĕсем. Хыçа юлнă вăхăт малашлăха пăхса ĕçлесе пурăнакан çыншăн ырăпа çеç асра юлĕ. Рынок экономикинчи йывăрлăхсене пăхса тăмасăр шав малалла аталанакансем, çĕнĕлĕхсене куллен алла илсе пыракансем хушшинче “Чувашия-Поддержка” страхлакан компани те. Çĕршыва рынок варкăшĕ килсе çапсан çуралнăскер, аталану ани çинче çулсерен мар, кунсерен ӳсĕм тăваканскер, иртнĕ кунсенче хăйĕн 15 çулне паллă турĕ. Мĕнле ӳсĕмсен чиккине çĕнме пултарчĕ-ха çак тапхăрта халăхăмăр хушшинче ырă шанчăк çуратнă компани? Çак ыйту çине хурав шыраса “Чувашия-Поддержка” страхлакан компанин Муркашри представительствине 2004 çултанпа ертсе пыракан пуçлăхĕпе, 2005 çултанпа “Моргауши-Согласие” ял хуçалăх потребителĕсен кредит кооперативĕн ĕç тăвакан директорĕпе Фаина Валентиновна Кирпичниковапа тĕл пулса калаçрăмăр.***

**– Фаина Валентиновна, “Чувашия-Поддержка” страхлакан компанин социаллă тĕллевĕ, ăна пурнăçлассишĕн унăн ĕçченĕсем пĕр çын пек вăй хуни Чăваш Республикинчи яллă территорисен аталанăвне çул уçать, ял çыннисене хушма ĕç вырăнĕсем парать, вĕсен пурнăç шайне çĕнĕ ӳсĕме çĕклет. Сире çапла хакласа йăнăшмастăп-и эпĕ?**

– Йăнăшу пирки сăмах та çук. “Чувашия-Поддержка” страхлакан компание пуçламăшĕнчех ялта пурăнакансемпе çĕр ĕçлекенсем валли, вĕсен ĕçне хӳтĕлеме йĕркеленĕ. Паянхи куна унăн устав капиталĕнче Чăваш Республикин Правительствин тӳпи 33,15 процент. Çакна шута илсе страхлакан компанин малашлăх аталанăвĕ республика экономикин аталанăвне пăхса йĕркеленсе пырать. Компани саккун кăларакан тата вырăнти власть органĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлет, пĕрле пулса федераллă тата республика шайĕнчи тĕллевлĕ программăсене пурнăçлама хутшăнать. Темĕнле лару-тăрура пулсан та пирĕн страховани ĕçĕн социаллă функцийĕ улшăнмасть: çын, темĕнле пулсан та, инкек-синкек сиксе тухичченхи пурнăç шайне ан çухаттăр. Çак тĕллевпе эпир паян районта пурăнакансене страховани ĕçĕн 21 тĕсĕпе тивĕçтеретпĕр. Вĕсен шутĕнче вырăнсене, пурăнмалли çурт-йĕрпе хушма хуралтăсене тата хваттерсемпе пӳлĕмсене, килти пурлăха, техника хатĕрĕсене тата çынсене хăйсене тĕрлĕ инкек-синкекрен страхласси. Куратăр ĕнтĕ, пирĕн страхлакан компани предприяти-организацисемпе уйрăм граждансене страховани услугисен анлă спекторне сĕнет. Пирĕн агентсем кашни инкек-синкек тĕслĕхĕпех вырăна тухса хамăр клиентсемпе уйрăммăн ĕçлеççĕ, вĕсене страхлас ĕçе те кашнинпе уйрăммăн пурнăçлаççĕ.

Клиентсен ыйтăвĕсене шута илсе компанире ĕçлекен программăсене вĕсене тивĕçтерме майлаштарса пыни, çĕнĕ енсене алла илни аталану çулне анлăлатсах пырать. Çапла ĕçлесе “Чувашия-Поддержка” страхлакан компани страховани ĕçĕпе ĕçлесе рынок системинче малта пыракан 5 компани йышне кĕрет. Унăн ĕçĕн тĕп принципĕсем: шанчăк тата клиентсем умĕнчи ответлăха туйни; вăл паракан пулăшăва клиентсем ыйтни; страховательпе çывăх тăни. Çак принципсене тĕпе хурса ĕçленипех ĕнтĕ “Чувашия-Поддержка” страхлакан компани 2004 çулта пĕтĕм тĕнчери “Ылтăн пахалăх Коронине”, 2005 çулта “Пахалăхшăн Платина Çăлтăрне” тата 2007 çулта бриллиант категорири “Пахалăх тĕнчи” приза тивĕçрĕ. Çак чыссем пирĕн компание шута хуни çеç мар, хамăр клиентсемпе тимлĕрех ĕçлеме хистени те.

**– Пĕрлехи ӳсĕм представительствăсен ĕçĕнчен пуçланать те Сирĕн утăмăрсем кунта еплерех-ха? 2007 çул мĕн çĕнни пачĕ Сире?**

– Пирĕн представительствăра паянхи куна 26 çын ĕçлет. Кашниех хăйĕн ĕçĕнче ăста, ответлăха çирĕп туять. Вĕсен тăрăшулăхĕпе хамăр ĕçе районĕпех сартăмăр. Çапла вара районти пур пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем те майлах пирĕнпе тыр-пул страхлаççĕ. Хресчен (фермер) хуçалăхĕсем те вĕсенчен юлмаççĕ. Кунта манăн хамăрпа тачă çыхăну тытакан “Гавитан” (ертӳçи В. Гаврилов), “Урожай” (А. Толстов), “Рассвет” (В. Отенов), “Краснов” (В. Краснов) фермер хуçалăхĕсене ырăпа палăртас килет.

Каласа хăвармалла, пирĕн страхлакан компани тырпул акса ӳстерекенсен 75-80 процентне хăй витĕмĕнче тытать. Республикăри акнă лаптăксен 95 проценчĕ унăн çинче. Кăçалхи çула илсе пăхсан, çуртрисене страхлакансем валли федераллă бюджетран 2 миллион та 536 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен 629,2 пин тенкĕ илчĕç те ĕнтĕ. Кăçал кĕрхи культурăсене страхлакансене субсиди тӳлеме те федераллă бюджетран 871,2 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен 217,8 пин тенкĕ уйăрчĕç ĕнтĕ.

**–“Чувашия-Поддержка” страхлакан компани тесен “Моргауши-Согласие” ял хуçалăх потребителĕсен кредит кооперативĕ ума тухать. Эсир пĕр çыхăнура пулнăран кооператив пирки мĕн калайратăр? Районти çынсем унпа çыхăну тытаççĕ-и?**

– Тытаççĕ тата тачă çыхăнура ĕçлеççĕ. Пирĕн кооператив членĕсем паянхи куна 452 çын. Кăçал район çыннисене эпир 17 миллион та 747 пин тенкĕ заем патăмăр. Çав шутра килти хушма хуçалăха аталантарма – 2,5 миллион тенкĕ. Каласа хăвармалла, заем илме ыйтса çырнисен ыйтăвĕсене эпир 2-3 талăкра татса паратпăр. Çынсем çакăнпа кăмăллă пулни эпир тĕрĕс çул çинче иккенне пĕлтерет. Заем панипе пĕрлех эпир халăх укçи-тенкине перекетлеме управа илессипе те тимлетпĕр. Ку ĕç 13-25 процентпа пулса пырать. Çакă та ял çыннисемшĕн вырăнлă пулни пирки иккĕленӳ çук.

Май килнипе усă курса эпир хамăр патăмăра страхлакан агентсене ĕçе илесси пирки пĕлтеретпĕр. Укçа хуракансене тата заем илме кăмăл тăвакансене килĕшӳллĕ условисемпе хамăр патăмăра чĕнетпĕр.

**– Фаина Валентиновна, эсир тăвакан ĕç районшăн пулнине курса Сире тата сирĕн патăрта ĕçлекенсене çывхаракан Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп.**

– Тавтапуç. Чăнах та умра – Çĕнĕ çул, Сурхури уявĕсем. Çак уявсем ячĕпе эпĕ те хамăр патăмăрта ĕçлекенсене, хамăрпа тачă çыхăну тытакансене, пирĕн клиентсене тата район çыннисене ăшшăн саламлатăп, ĕçре ӳсĕм, пурнăçра телей, çемьере килĕшӳпе юрату, çирĕп сывлăх сунатăп.

Хамăр калаçăвăмăр вĕçĕнче вулакансене çĕнĕ хыпар пĕлтеретĕп: “Чувашия-Поддержка” страхлакан компани хăй 15 çул тултарнă ятпа инкек-синкекрен страхланакансем хушшинче лотерея ирттерчĕ. Республикăри пĕтĕмĕшле 78 вылявран 12-шĕ Муркашсене лекни – пурсăмăршăн та Çĕнĕ çул парни.

Район çыннисем çитес çул пирĕнпе татах та ăнăçлăрах ĕçлессе шанса калаçăва вĕçлетĕп. Сывă юлăр!

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Ӳсĕмлĕ ĕçлекен коллективсенче

# Яланах малтисен ретĕнче




“Моргаушская” чăх-чĕп фабрики пирки районта кăна мар, республикăра та ырă сăмах кăна çӳрет. Кунти производство малта пыракан технологисемпе тусլашса ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăвать, мал туртăмлă ĕçлекен валли чикĕ çуккине çирĕплетет.

Муркашри чăх-чĕп фабрики республикăра та сумлисенчен пĕри. Маларах та, халĕ те туса илнĕ продукци пахалăхĕпе палăрса тăнă тата тăрать вăл. Паянхи кун предприятин çурт-йĕрĕ сакăр гектара яхăн йышăнать, тырă-пулăпа курăк акса çитĕнтермелли лаптăк 80 гектар ытла. Фабрика хăй суйласа илнĕ çул-йĕртен пăрăнмасăр шав малалла аталанать. Çулталăк пуçланнă тĕле кунта пурĕ 217 пин чăх пулнă пулсан, халĕ – 260 пин. Вĕсенчен 164 пинĕ çăмарта тăвать. Çитес çул пуçламăшĕнче вара çăмарта тăвакан чăхсен йышĕ 214 пине çитмелле. Чăхсен йышĕ ӳснипе пĕрлех фабрикăра производство та пĕр вырăнта тăмасть. Унччченхи çулсенче кашни чăхран 280 – 290 çăмарта илни пысăк çитĕнӳ шутланнă, пĕлтĕр вара çак кăтарту 314 çăмартана çитнĕ. Çакăнта малта пыракан çĕнĕ технологисене пурнăça кĕртни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

– Предприяти çулталăкра çĕннине нимĕн те тумасан, технологие çĕнетмесен, вăтам ĕç укçине ӳстермесен тата продукци пахалăхне лайăхлатмасан çав предприятин пуласлăхĕ çук. Эпир çапла тăватпăр та. Паян эпир чăх-чĕп валли тухăçлă апат хатĕрлессипе компьютер программине пăхăнса ĕçлетпĕр. Çитĕнӳсем çук мар. Çулталăк хушшинче 32 вакун комбикорм перекетлеме май пачĕ. Çав вăхăтрах кашни чăхран 50 çăмарта ытларах илтĕмĕр, – терĕ фабрика директорĕ Николай Григорьевич Ванеркин ноябрĕн 9-мĕшĕнче Чăваш операпа балет театрĕнче республикăри ял хуçалăхпе продукци тирпейлекенсен кунне халалласа ирттернĕ уявра ЧР Президенчĕн Н. Федоровăн аллинчен çĕнĕ технологисене ăнăçлă пурнăça кĕртнĕшĕн дипломпа укçан премие илнĕ хыççăн.

– Çĕнĕ технологисем продукци туса илнĕ çĕрте çеç мар, хатĕр продукцие тирпейлес тата халăх патне çитерес ĕçре те малти вырăнта пулмалла. Фабрика дирекцийĕ çакăншăн тăрăшать те эпир те çак ырă çултан айккинче юлас теместпĕр. Район шайĕнче иртекен кашни уява майлах хамăр продукцирен хатĕрленĕ пуян апат-çимĕç ассортиментчĕпе тухатпăр, – терĕ кăçал иртнĕ Тыр-пул уявĕнче хăйсен ĕçĕпе паллаштарнă май курава чăх-чĕп продукцийĕнчен хăйсем хатĕрленĕ 12 тĕрлĕ ассортиментпа тухнине палăртса 2-мĕш çул фабрикăра поварта ĕçлекен Зинаида Юрьевна Петрова.

– Маттурсем, – пулчĕ манăн хурав.

**Анатолий БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

“Вĕрентӳ” наци проектне пурнăçласа

# Мускав генералĕ Муркашра

Муркашри лицей Раççей Федерацийĕн Президенчĕн грантне 2006 çулта пуринчен малтан тивĕçнисен шутĕнче пулчĕ. Мускавран килсе çитнĕ миллион тенкĕ лицей пурнăçне, кунти вĕрентӳ системине тĕпрен улăштарчĕ. Акă тăтăшах çĕнĕлĕхсем шыракан лицей иртнĕ вĕренӳ çулĕнчен пуçласа кадетсен ушкăнне йĕркелерĕ. Кăçал çак çула суйласа илнисемпе шутласан паян лицейра 24 кадет. Вĕсем хăйсем умне çĕршыва сыхлассине, обществăри йĕркелĕхе пăхса тăрассине, лицейра пухнă пĕлӳпе хăйсем суйласа илнĕ професси çирĕп алла илес тĕллеве лартнине ырламалла кăна.

Иртнĕ кунсенче Муркашри лицее Мускавран Раççей Федерацийĕнчи наркотиксен çаврăнăшне тĕрĕслесе тăракан федераллă службăн информаци ĕçĕ-хĕлĕн ведомствăсем хушшинчи департаменчĕн пуçлăхĕ, полицин генерал-лейтенанчĕ А. Михайлов килсе кайрĕ. Унпа пĕрле лицее килнĕ асăннă служба Чăваш Республикинчи управленийĕн пуçлăхĕпе унăн çумĕ В. Сивцов генерал-майорпа С. Чехов полковник та лицей пурнăçĕпе тĕплĕн паллашрĕç. Çак кун лицей хăнисем хушшинче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, социаллă аталану пайĕн ертӳçи А. Андреева, ЧР çар комиссариачĕн уйрăм ертӳçи М. Малов, районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Макаров, Муркашпа Элĕк районĕсен çар комиссарĕ А. Пркопьев пулчĕç.

Генералсем килни ăнсăртран та пулмарĕ. Вĕсем кадетсене савăнăçлă лару-тăрура пакунсем пачĕç. “Çак пакунсем хыççăн сирĕн ытти пакунсем пуласси пирки иккĕленместпĕр”, – терĕ А. Михайлов генерал-лейтенант савăнăçлă каçа вĕçлесе.

**А. ПЕТРОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**



А. Михайлов генерал-лейтенант кадетсене пакунсем панă самант.